1942
ОКТЯБРЬ
15
КĔÇНЕРНИКУН
241 (6176) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çамрăк рабочисене вĕрентсе ӳстересси— государствăн пысăк ĕçĕ

Пирĕн промышленноçпа транспортра çамрăксем яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче, квалификациллĕ рабочисенчен пĕр пайĕ фронта кайнă май, вĕсен вырăнĕ татах та ӳсрĕ. Алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва сыхлакан ашшĕсем, пиччĕшсем вырăнне вĕсен арăмĕсем, ывăл-хĕрĕсем, шăллĕ-йăмăкĕсем тăчĕç, пирĕн фабрикăсемпе заводсенче çамрăк рабочисен çĕнĕ йышĕ хутшăнчĕ.

Çамрăк патриотсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Квалификацие хăвăрт вĕренсе çитсе, производствăна çĕнетсе пырса, стахановла пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Нумаях та пулмасть ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă, халĕ Улатăр станцийĕн деповĕнче ĕçлекен Иван Рябовпа Юрий Дохленко çамрăксем хăйсен профессине вĕренсе пынă вăхăтрах рационализаторла сĕнӳсем параççĕ. Панă сĕнӳсенчен пĕринпе ĕçре усă курса пĕр йышши детальсене хăйраса якатас вăхăта чылай кĕскетнĕ. Рябовпа Дохленко юлташсем опытлă рабочисенчен пĕртте юлмаççĕ, сменăри заданисене пĕрмаях 2-шер хут ирттерсе тултараççĕ. Çакăн пек тухăçлă ĕçлекен, фронтпа çĕршыва ытларах продукци парассишĕн çунакан çамрăк рабочисемпе работницăсем Н-ски заводра, Сĕнтĕрвăрринчи суднăсем тăвакан верфьра, Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрикăра сахал мар. Вăрнарти фосфорит кăларакан заводра вĕсем рабочисен пĕтĕм хисепĕнчен 75 процентне чухлĕ шутланаççĕ, чылайĕшсем нормăна ирттерсе тултараççĕ. Çамрăк стахановецсемпе стахановкăсен хисеплĕ ячĕсене республикăри кашни предприятирех кăтарту хăмисем çинче курма пулать.

Юлашки вăхăтра фабрикăсемпе заводсене пынă çамрăксем—пирĕн промышленноçăн малашлăхĕ, унăн пулас кадрĕ. Çавăнпа вĕсем хăйсен квалификацине вĕренсе çитме, техникăна алла çавăрса илме тăрăшаççĕ. Анчах рабочисен çĕнĕ йышне вĕрентсе ӳстерес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларма юрамасть, çамрăксен хĕрӳлĕхĕ, тăрăшулăхĕ хăех çак кирлĕ ĕçе татса парать тесе ăнланма юрамасть. Пирĕн партипе комсомол тата профсоюз организацисем, хуçалăх руководителĕсем—предприятисен директорĕсем, цех начальникĕсем, халăх комиссариачĕсен работникĕсем çак ĕçе хăйсен аллине илсе ертсе пыма тивĕçлĕ.

Вăрçă йывăрлăхĕ кадрсене халиччен. хинчен темиçе хут хăвăртрах хатĕрлеме хушать. Кадрсене вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа хатĕрлес пулсан, пирĕн промышленноçпа транспорта çĕнĕрен пынă рабочисене производствăна, техникăна пĕр чарăнмасăр тата тимлĕн вĕрентес пулать, вĕсене опытлă рабочисемпе танлашиччен вĕрентсе ӳстерес пулать.

Çамрăк рабочисене вĕрентнĕ çĕрте пирĕн производствăпа техникăн уйрăмлăхĕсемпе, инженерсен тата техникисен пĕлĕвĕпе, мастерсен тата стахановецсен опычĕпе анлăн усă курас пулать. Ватă рабочи, опытлă мастер, ăста стахановец производствăна халĕ çеç пынă çамрăка ĕç хатĕрĕсемпе усă курма, вăхăта хаклама, технологи процесне хăнăхма [illegible]

«секречĕсемпе» паллаштарма пуринчен те ытларах май пур. Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăри стахановка-комсомолка Лукьяненко юлташ, хăйĕн нормине 160-200 процент тултарса ĕçленĕ вăхăтра, темиçе хĕрачана чăлха çыхас ĕçе вĕрентсе çитернĕ, халĕ те çине тăрса вĕрентет. Пир-авăр тĕртекен фабрикăри Фомичевпа Сазонов мастерсем те çамрăксене станоксемпе ĕçлеме вĕрентес ĕçре çавăн пек майпа пултаруллăн усă кураççĕ.

Çĕнĕ рабочисене вĕрентмелли чи лайăх май вăл—стахановла шкул. Стахановец, хăйĕн шкулĕнче производствăри пекех юратса ĕçлет пулсан, çамрăксене станокпа усă курма, детальсене хатĕрлеме, тĕрлĕрен операцисене пурнăçлама пĕрерĕн мар, ушкăнăн-ушкăнăн вĕрентме пултарать.

Çакăн пек стахановла шкулсене кашни предприятирех тумалла, вĕсене ертсе пырас ĕçе чи опытлă, чи паллă стахановецсене, социализмлă ĕçĕн чăн-чăн мастерĕсене хушмалла. Стахановла шкулсем вăхăтран вăхăта мар, пĕр чарăнмасăр, çулталăкĕпех ĕçлемелле.

Анчах чылай предприятисенчи партипе комсомол организацисем, хуçалăх руководителĕсем стахановла шкулсене ертсе пырас ĕçе манăçа хăвараççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра иртнĕ кĕркунне çавăн пек шкулсене пур цехсенче те пекех организациленĕччĕ. Малтанхи вăхăтра вĕсем самаях ĕçлетчĕç, халĕ, ертсе пыракан работниксем вĕсем çинчен маннă пирки, хăшпĕр цехсенче çеç ĕçлекелеççĕ.

Çамрăк рабочисене пăхса ӳстересси—государствăн питех те пысăк ĕçĕ. Халĕ, отечественнăй вăрçă условисенче, пирĕн халăх хуçалăхĕшĕн çак ĕç нихăçанхинчен ытларах кирлĕ пулса тăрать. Анчах çакна пур çĕрте те тивĕçлипе ăнланса илмеççĕ-ха. Хăшпĕр предприятисен руководителĕсем ытти çĕрте вĕрентсе хатĕрленĕ кадрсене парасса кĕтсе лараççĕ. Кадрсене хатĕрлес ĕç çине çапла тимсĕррĕн тата чиновникла пăхнине хальхи вăхăтра хытă сивлемелле.

Предприяти директорĕсен, партипе профсоюз организацисен кадрсем хатĕрлес ĕçе пĕрмаях ертсе пымалла, вĕсен çамрăк рабочисемпе работницăсене профессие вĕренсе алла илме мĕн кирлине пурне те туса памалла. Производствăна çĕнĕрен пынисем валли йĕркеллĕ пурăнма, тухăçлă ĕçлеме кирлисем —ăшă çуртйĕр, столовăй, ĕçри çи-пуç т. ыт. те—пурте пулччăр. Партипе комсомол работникĕсен, предприятисен руководителĕсен çамрăк рабочисемпе работницăсен пурнăçпа йăла условийĕсемшĕн ытларах тăрăшас пулать, вĕсене ватă рабочисен ретне тăраччен пулăшас пулать.

Унпа пĕрлех çамрăксене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен пăхса ӳстерес ĕçе манма юрамасть. Хальхи вăхăтра тухăçлă ĕçлени мĕн пек пысăк усă кӳни çинчен, тылри пархатарлă ĕç фронтри хĕрӳ çапăçу пекех паха вырăн йышăнса тăни çинчен вĕсене ăнлантарса парас пулать. Ку тĕлĕшпе çамрăксем хушшинче парти, комсомол тата профсоюз работникĕсен ытларах ĕçлемелле. Коммунистпа комсомолец çамрăксен чи çывăх тусĕ, вĕсене вĕрентекенĕ, çул кă- [illegible]

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Хĕрлĕ Çарта военнăй комиссарсен институтне пĕтерсе çирĕп единоначали тăвасси çинчен йышăнна Указ Тинĕс-Çар флотĕнче те вăя кĕрет

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Хĕрлĕ Çарта военнăй комиссарсен институтне пĕтерсе çирĕп единоначали тăвасси çинчен 1942 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнче йышăннă Указа Тинĕс-Çар флотĕнче те вăя кĕмелле тунă.

Çавна май Тинĕс-Çар флотĕн мĕнпур карапĕсем çинче, подразделенийĕсенче, частĕсемпе соединенийĕсенче, штабсенче, военно-учебнăй заведенийĕсенче тата учрежденийĕсенче командирсен политика енĕпе заместителĕсен институтне пулать.

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Союзĕсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе СССР Вăтам Машиностроени Халăх Комиссариачĕ автомобильсем промышленноçĕн изделисем паракан завочĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене тунă.

Сентябрь уйăхĕнче лайăх ĕçленĕ те паллартнă предприятисен хисепĕнче пирĕн республикăри Бунин юлташ директорĕ пулакан завод [illegible] ВЦСПС-па Вăтам Машиностроени Халăх Комиссариачĕн [illegible] завод коллективне [illegible] премине [illegible] тунă.

Совет Союзĕпе Австрали пĕр-пĕринпе дипломатилле çыхăну тытмалла туни

Совет Союзĕпе Австрали правительствисем Совет Союзĕпе Австрали пĕр-пĕринпе дипломатилле çыхăну тытасси çинчен тата Совет Союзĕпе Австрали пĕр-пĕрин патне хăйсен посланникĕсене ярасси çинчен килĕшнĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ А. П. Власов юлташа Совет Союзĕн Австралири чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Австрали правительстви Вильям Слейтер господина Австралин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

МТС-сен дирекцийĕсемпе политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Канаш МТС-ĕ тăрăх:

156. **7-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ Никита Павлович Павлов юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассине те шутласан, 163 процент тултарнă тата 1.700 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

157. **4-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ Петр Макарович Львов юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассине шутламасăр, 131 процент тултарнă тата 1.712 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

158. Тракторист **Гаврил Тихонович Тихонов.** Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 235 процент тултарнă тата 30 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

159 Тракторист **Петр Васильевич Амусов.** Вăл СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 217 процент тултарнă тата 379 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

160. Трактористка **Мария Тимофеевна Тимофеева.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 146 процент тултарнă тата 340 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

161. Трактористка **Матрена Григорьевна Волкова.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 146 процент тултарнă тата 332 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

162. Комбайнер **Тарас Иванович Селиванов.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 308 гектар тырă вырса пуçтарнă, ĕçе лайăх тунă.

Вăрнар МТС-ĕ тăрăх:

163. Комбайнер **Антон Иванович Шланов.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 218 гектар тырă вырса пуçтарнă, ĕçе лайăх тунă тата 185 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

164. Комбайнер **Кузьма Михайлович Михайлов.** Вăл, «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе, планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 211 гектар тырă вырса пуçтарнă тата 72 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Хĕрлĕ ялав илнĕ бригадăн чыслăхне çӳлте тытса тăратпăр

Ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те лайăх тата кĕске срокосенче туса ирттерме социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илнĕччĕ: тракторпа тумалли çулталăкри ĕçсен планне 130 процент тултармалла, ĕç вăхăтĕнче плугарьсем пулса ĕçлекен 4 хĕрачана тракторпа ĕçлеме вĕрентсе çитермелле, горючине 7 процент перекетлесе хăвармалла.

Хамăр çине илнĕ çак обязательствăсене эпир чыслăн пурнăçласа пытăмăр. Çураки планне ирттерсе тултартăмăр. Горючине чылай перекетлесе хăвартăмăр. Çавăнпа пире МТС дирекцийĕпе политотделĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç.

Хĕрлĕ ялавсем илнĕренпе бригадăра улшăнусем чылай пулчĕç. Чи лайăх ĕçлекен трактористсем Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕç, вĕсем вырăнне тракторсем çине çамрăк хĕрачасем ларчĕç.

Тракторист-стахановец Жидков юлташ фронта каяс умĕн хăйĕн вырăнне юлакан çамрăк трактористкăпа Мария Сорокинăна çапла каларĕ:

— Ну, Маруся, эпĕ нимĕçсен урса кайнă йыттисене хамăрăн тăван çĕршывран тасатма каятăп. Эсĕ ĕнтĕ тракторпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕн, ĕçле кунта хăвшăн та, маншăн та. Стахановла ĕçле, нормăсене ялан тултарса пыр, пысăк пахалăхпа ĕçле. Эпир илнĕ обязательствăсене пурнăçласа пырăр, стахановла бригадăн чысне çӳлте тытăр, — терĕ.

Сорокина Мария ăна çапла ответлерĕ: Юрĕ, Коля, эсĕ хушнине манмăп, ĕçпе ответлĕп. Эсĕ паттăр пул, тăшмана вутлăн-хĕмлĕн çĕмĕр, çĕнтерӳпе таврăн, — терĕ.

Опытлă трактористсем вырăнне çамрăк трактористкăсем тăчĕç пулсан та, бригада çĕртме сухине, тырпулçене пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн туса пычĕ. Трактористкăсем фронта кайнă юлташсен хĕрӳ сăмахĕсене яланах асра тытса ĕçлеççĕ, стахановла бригадăн чысне çĕклесе пыраççĕ.

Халĕ эпир кĕрхи çĕртме тăватпăр. Трактористка Мария Сорокина ХТЗ-НАТИ тракторпа сменăра 8—9-шар гектар сухалать. Хăшпĕр кунсенче вăл 11-шер гектар та сухалать. Вăл йывăрлăхсенчен хăраса тămasть, трактор пăсăлсан — хăех юсать. Кĕрхи çĕртме тумалли плана ирттерсе тултарнăшăн Сорокина юлташ 60 ĕçкунĕ преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ĕç условийĕ йывăр пулсан та, 33 килограмм краççин перекетлесе хăварчĕ.

Анна Королева, Варвара Котеева тата ытти трактористкăсем те куллен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çумăр-и, сивĕ-и — пирĕн тракторсем çав-çавах пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Çамрăк трактористкăсен, комбайнерсен ĕçри хастарлăхне пула пирĕн бригада кăçал çулталăкри ĕçсен планне 127 процент, комбайнсемпе тырă вырмалли плана 150 процент тултарчĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва кашниех хутшăнтăмăр. Октябрь уявĕччен çĕртме тумалли тата авăн çапмалли плансене пĕтĕмпех пурнăçлатпăр.

Ф. АФОНДЕРКИН.
Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн 2-мĕш №-лĕ трактор бригадин бригадирĕ.

Уяв умĕнхи ăмăрту сарăлса пырать

СОВЕТСКОЕ. Уйкас-Асламасри «Искра» колхоз, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕçре чылаях пысăк ӳсĕмсем турĕ. Нумаях пулмасть колхоз 212,65 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарчĕ. Авăна сложнăй молотилкăпа çапрĕç. Молотилкăна кашни кунах 16 сехетрен кая мар ĕçлеттерчĕç. Итем çинчи ĕçсене чи малтан Мария Димитрева ертсе пыракан бригада пуçтарса кĕчĕ. Бригадăри колхозниксем ĕçе хастарлăн туса пычĕç.

Колхоз çĕрулмине вăхăтра тата пĕр тăкаксăр кăларса пуçтарчĕ. Государствăна памалли çĕрулмине çийĕнчех леççе турттарса панă. Государствăна тырă памалли плана та колхоз пĕтĕмĕшпех тултарчĕ, çăмарта, аш-какай парса татрĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртăва активлăн хутшăнса, колхозниксем фермăсене выльăхсемпе комплектласа çитерес тĕлĕшпе тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма лайăх условисем туса парассишĕн хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Çак иртнĕ кунсенче фермăсем валли 18 сурăх, 16 пăру çĕнĕрен илчĕç.

Вăрçă фрончĕсенче пирĕн ирĕклĕ пурнăçа сыхласа геройла кĕрешекен боецсем патне уяв ячĕпе колхозниксемпе колхозницăсем тулă çăнăхĕнчен тунă сухари, çăмарта, пыл, махорка нумай ярса пачĕç.

Çатракассинчи «Рекорд» колхоз та аслă уява пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Колхоз государствăна тырă парса татрĕ. Авăн çапас ĕçе хĕрӳллĕн туса пырать. Паянхи куна колхоз государствăна аш-какай, çу, çăм, çăмарта памалли обязательствăсене те пĕтĕмĕшпех парса татнă.

Я. СИГАЙ.

Колхоз ăмăртура

ЕЛЧĔК. Кушкăри «КИМ» колхоз членĕсем кăçал тырăсене планпа пăхнинчен маларах, пĕр тăкаксăр пухса кĕртрĕç, кĕлтесене капана хывас ĕçе кая юлмасăр вĕçлерĕç. Колхозниксем халĕ авăн çапаççĕ, государствăна тырă параççĕ.

Ыраша сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çапса пуçтарнă. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ. Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 20 гектара яхăн акса хăварнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, колхоз авăн çапас ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме тата государствăна тырă парас плана та çак кунсенчех тултарма пулнă. Хăйсем çине илнĕ обязательствăсене колхозниксем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхоз 1942 çулшăн çу, çăм, çăмарта парса татнă. Çăмарта обязательствине ирттерсе тултарнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана та пурнăçа кĕртнĕ. Витесене ăшăтнă, юсаса лартнă.

Н. МАРТЫНОВ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Виçĕмкун ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн черетлĕ 18-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту—кăçалхи çулăн виççĕмĕш кварталĕнче партие çĕнĕ çынсем илнин итогĕсем çинчен тата Н-ски заводăн рабочисене снабжени парса тăрас енĕпе ĕçлекен отделĕн ĕçĕ çинчен сӳтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) Хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик хулари парти организацийĕ юлашки вăхăтра хăйĕн речĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçе лайăхлатнине палăртрĕ. Кăçалхи çулăн виççĕмĕш кварталĕнче парти ретне çĕнĕрен 85 çынна, вĕсенчен ВКП(б) членне—35 çынна, кандидата—50 çынна илнĕ. Вĕсем пурте—предприятисемпе шкулсенчи тата учрежденисенчи чи лайăх çынсем. Вĕсем хушшинче—белофинсемпе кĕрешнĕ çĕрте пулнă орденоносец Васильев юлташ, отечественнăй вăрçă участникĕсем—Топчий, Корсков юлташсем, рабочи-двухсотниксем Обаков, Семенов, Куликова, Лукшина, Лебедева, Олаев т. ыт. юлташсем пур.

Партие кĕме ĕмĕтленекен çынсен йышĕ кунран кун ӳссе пырать. Халĕ, фашистсене хирĕç пыракан вăрçăра тăван çĕршывăн кунçулĕ пирки ĕç таталнă вăхăтра, парти речĕсем ӳсни уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать. Çакă вăл пирĕн совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ таврра татах та таччăнрах пĕтĕçсе тăнине, парти çине халăх татах та ытларах шанса пăхнине, партипе халăх хушшинчи çыхăнусем çирĕпленсе пынине кăтартса парать.

Анчах çапах та чылай парторганизацисем хăйсен речĕсене ӳстерес ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Хлебкомбинатри, Шупашкарти çыхăну конторинчи, пир-авăр фабрикинчи, табак фабрикинчи, госбанкри, Наркомпищепромри, уполнаркомзагри парторганизацисем çак ыйтупа пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çав парторганизацисен секретарĕсем хула комитечĕн 16-мĕш пленумĕн решенийĕсенчен тивĕçлĕ выводсем туман, вĕсенчен парти мĕн ыйтнине ăнланса илмен, партин шалти питех те пысăк ыйтăвне татса парас ĕç çине—хăйсен речĕсене ĕççыннисем хушшинчен чи лайăххисене суйласа илес ĕç çине ответлăхсăр пăхнă.

Виççĕмĕш кварталри ĕçĕн итогĕсене анализ туса, Романова юлташ хулари парти организацийĕ рабочисен, хĕрарăмсен тата комсомолецсен шутĕнчен уйрăмах çителĕксĕр ӳссе пынине кăтартса пачĕ. Нумай парторганизацисенче партие çĕнĕ çынсем илес тĕлĕшпе парторганизаци секретарĕ е унăн заместителĕ кăна ĕçлеççĕ. Çак ĕç вăл пĕтĕм парторганизаци, çавăн пекех тата кашни коммунист уйрăммăн туса пыма тивĕçлĕ ĕç.

Доклад тăрăх пренире Поддубко, Марголис (1-мĕш номерлĕ типографи), Малькова (Атăл лешьенчи торф предприятийĕ), Наумова (пир-авăр фабрики), Прокопьева (Госбанк), Камбулова, Яковлев («Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕ), Петрова (Чăвашсоюз) юлташсем тухса каларĕç.

Пленум хăйĕн решенийĕнче хула комитечĕн бюровне тата пуçламĕш парторганизацин секретарĕсене партире тăман рабочисемпе интеллигенци хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе татăклăн лайăхлатма, активпа ĕçлессине вăйлатма тата, парти ретне уйрăмшарăн суйласа илес принципа çирĕп тытса пырса, партие рабочисемпе совет интеллигенцийĕнчи чи лайăх çынсене, вăрçă вăхăтĕнчи хаяр испытанисенче тĕрĕсленнĕ çынсене илме хушса хăварчĕ. Пленум хула комитечĕн оргинструкторски отделĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатма кирлине кăтартса хăварчĕ. Оргинструкторски отделăн ВКП(б) ретне çĕнĕ çынсем илес енĕпе пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене ĕçлĕ пулăшу парса пымалла, предприятисемпе учрежденисенче организациллĕ, партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатмалла.

Кун хыççăн пленум Н-ски заводăн рабочисене снабжени парса тăрас енĕпе ĕçлекен отделĕн ĕçĕ çинчен Каплин юлташăн докладне сӳтсе-яврĕ. Доклад тăрăх пренире Калиновская, Бенский, Кузнецова (хулари çĕрĕç отделĕн заведующийĕ), Локшин («Пекарь» артель), Логинов (пир-авăр фабрики), Герасин (столовăйсемпе ресторансен трестĕ), Шуникова юлташсем тухса каларĕç.

Докладчикпа доклад тăрăх тухса калакансем рабочисене снабжени парса тăрас енĕпе ĕçлекен отделсене организацилени рабочисене снабжени парса тăрас тата апатлантарас ĕçе чылай лайăхлатма пулăшнине палăртрĕç. Анчах çав отделсен ĕçĕсене нумай лайăхлатмалла-ха. Сăмахран, Н-ски завод çумĕнчи ОРС кăçалхи çул хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕнче пахча-çимĕçсем питех те сахал туса илнĕ. Çĕрулми гектартан планпа пăхнă 12,2 тонна вырăнне 8,5 тонна кăна, помидор 15 тонна вырăнне 3,7 тонна кăна туса илнĕ. 2,5 гектар çинчи хăяр пĕтĕмпех пĕтнĕ.

Заводра сĕт-çу ферми тата хур-кăвакал ферми организацилес ыйтăва кутаринччĕн те татса паман. Выльăх-чĕрлĕхсем валли çуртйĕрсем тума тытăнман. Пур пек выльăх-чĕрлĕхсем валли те апат-çимĕçсем хатĕрлемен. Кунта выльăхсем вилни те пулкалать.

ОРС-сен работникĕсем çавăрăнуçăсăр ĕçлени халĕ колхозсенче пахча-çимĕçсемпе çĕрулми сутăн илес ĕçе тӳсме çук вăрахăн туса пынинче уйрăмах палăрать. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пахча-çимĕçсемпе çĕрулми хатĕрлемелли плана 39,1 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Çынсем районсене кайса колхозсенче темиçе эрне, тепĕр чухне уйăхшар та лараççĕ, тăтăшах ĕç укçи, командировкăпа хваттер укçисем илсе тăраççĕ, анчах ĕç вырăнтан пачах та хускалмасть. Çапла, сăмахран, Стекольщиков юлташ Хĕрлĕ Чутай районĕнче пĕр уйăх çурра яхăн ларса, 20 тонна çĕрулми илмелĕх кăна договорсем тунă. Пахча-çимĕçсемпе çĕрулми хатĕрлес ĕçе çавăн пек вăрахăн туса пынине ытти предприятисенче те курма пулать. Пленум подсобнăй хуçалăхсене çитес хĕле хатĕрлес тата 1943 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерме хатĕрленес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма хушрĕ.

Пленумра юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ.

Чарыков юлташ хăйĕн сăмахĕнче хулари парторганизацин ĕçĕнчи питех те кирлĕ ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ, партие çĕнĕ çынсем илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн ĕçлеме кирлине кăтартса пачĕ.

Рабочисене снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсен ĕçĕ пирки чарăнса тăрса, Чарыков юлташ çакна палăртрĕ: предприятисенчи рабочисене çителĕклĕ таран апат-çимĕç парса тăрас тĕлĕшпе ОРС-сем мĕн кирлине пурне те тумаççĕ-ха, хăшпĕр предприятисен руководителĕсем хăйсен рабочийĕсемшĕн тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Чарыков юлташ ОРС-сен ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтерме кирлине, рабочисене снабжени парса тăрас ĕçе пур предприятисенче те, уйрăмах промышленноçăн ертсе пыракан отраслĕсен предприятийĕсенче, тĕпренех лайăхлатма кирлине кăтартса пачĕ.

Коммунистсем ăмăртура малта пыраççĕ

ÇĔМĔРЛĔ. (**«Чăваш Коммуни» корр.).** Чугунçул станци коллективĕ юлашки вăхăтра, ăмăртăва сарса пынă май, хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Ăна вокзала кĕрсен те, лини çине тухсан та уççăнах курма пулать. Пур çĕрте те тасалăхпа йĕркелĕх тунă. Поездсене лайăх кĕтсе илсе вăхăтра ăсатаççĕ. Пĕтĕм ĕçĕн результачĕ çакăнпа виçĕнет те ĕнтĕ.

Малта пыракан стахановец-кривоносовецсем ĕçе пысăк мастерлăхпа туса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе коммунистсем пример кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсен опычĕсене ытти рабочисем хушшинче сарса пурне те лайăх ĕçлеттерме тăрăшаççĕ. Коммунист С. Потапов чугунçул транспортĕнче чылайранпа ĕçлет, халĕ вăл станци дежурнăйĕ. Унăн ĕçĕнче простой, авари пулмасть. Кашни поездах хуть те хăш вăхăтра та, хуть те мĕнле çанталăкра та вăл вăхăтра кĕтсе илет, вăхăтра ăсатса ярать. Коммунист Потапов ытти дежурнăйсене те лайăх ĕçлеме вĕрентет. Унпа пĕрле ĕçлекен Литонин юлташ, акă, пĕр простой тумасăр ĕçлет, лайăх ĕçленĕшĕн ăна темиçе хутчен тав тунă.

Коммунист Н. Табункин юлташ стрелочник пулса ĕçлет. Унăн стрелка хуçалăхĕ яланах юсавлă, стрелкăсене вăл отлично тытса тăрать, хăшпĕр пĕчĕкрех япаласене хăех ремонт тăвать.

— Эпир Табункин юлташран пример илсе ĕçлетпĕр.—тессĕ ытти стрелочниксем

Стрелочниксем хушшинче халь ăмăрту сарăлса кайнă. Вĕсем пурте малта пыракан Табункин, Смирнова юлташсем пек ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Линисене юсаса çӳрекенсем те ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕç. Пур участоксенче те çула лайăх тытса тăраççĕ. Çул мастерĕ Кольдяев юлташăн ĕçне уйрăмах палăртмалла. Вăл рабочисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе куллен туса пырать; вĕсене стахановла, фронтри пек ĕçлеме чĕнет. Кунта стахановец—кривоносовецсем сахал мар. Старши ремонтнăй рабочисем А. Литонин, И. Алексеев юлташсем, акă кулленхи нормăсене 200 процент тултарса пыраççĕ, обходчиксем Докунинпа Архипов юлташсем хăйсен километрĕсене отлично тытса тăраççĕ. Çакăнтах мастер Кольдяев юлташ пулăшнипе çамрăк работницăсем Е. Пензина, М. Тишкина, А. Зубрина, В. Шубаева ремонт ĕçне хăйсем тĕллĕнех тума пуçларĕç.

Чугунçул станцийĕ хĕле хатĕрленсе çитрĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне станци хĕле хатĕрленсе çитнипе социализмлă паспорт илнĕ.

Хальхи вăхăтра станцире ĕçлекенсем хушшинче ăмăрту сарăлсах пырать. Çак ăмăртура коммунистсем малта пыраççĕ, хăйсен ĕçĕнчи лайăх примерĕпе пĕтĕм коллектива ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантарса пыраççĕ.

Х. ЛИСИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 13-мĕшĕнче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем хулари кварталсенчен пĕринче унччен хăварнă позицисене каялла туртса илнĕ. Ытти участоксенче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине тупăпа тата миномётпа персе тăнă. Пирĕн артиллери нимĕçсен 3 танкне, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 16 батарейине пĕтерсе тăкнă, 10 дзота çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çаплах малтанхи рубежсене хӳтĕлесе тăнă тата уйрăм участоксенче разведка тунă. Н-ски чаçăн гвардеецĕсем, противник оборонин малти линине атакăласа, нимĕçсене кăштах каялла чакарнă, пĕр противотанковăй пăшал, 16 пулемет, миномет батарейине тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 8 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Рота командирĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ Кулик юлташ ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ пĕр высота çинче противникăн лайăх маскировка тунă дзочĕсене тупнă. Икĕ хăюллă паттăр пĕр дзочĕ патне никам асăрхамалла мар шуса пынă та гранатăсем вăркăнтарма тытăннă. Хăраса ӳкнĕ румынсем дзотран тухса тарма тытăннă. Пирĕн разведчиксем пеме пуçланă та тăшманăн 20 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Моздок районĕнче нимĕç пехотин икĕ батальонĕ, танксемпе авиаци пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсене тупăпа тата миномётпа персе чарса лартнă та, унтан вĕсене унччен тăнă позицийĕсем çине хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕçсен 300 салтакпа офицер таран тата пĕр танк пĕтнĕ, унсăр пуçне противникăн 3 орудине, 2 минометне тата 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре краснофлотецсем Кравченко юлташ ертсе пынипе противникăн атакине сирсе янă та хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Çав çапăçура румынсен 2 ротине вĕлерсе тăкнă тата противникăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем пирĕн подразделенисен позицийĕсене атакăланă. Совет боецĕсем противникăн атакисене сирсе янă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлерсе тăкнă. Пĕр танк, 6 пулемет, винтовкăсем тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Могилев облаçĕнчи партизансен ушкăнĕ нимĕçсен чугунçулпа пыракан 46 вагонлă поездне ӳпĕнтерсе янă. Çавăн чухне 11 танк, 16 автомашина, 2 зенитнăй оруди пĕтнĕ тата 100 гитлеровеца çити вилнĕ.

* * *

Финсен 3-мĕш пехотнăй бригадинчен Хĕрлĕ Çар енне каçнă салтак Вяйне Л. çапла каласа панă: «Финн халăхĕ вăрçăпа ывăнса çитнĕ. Нумайĕшĕ çакна ăнланса илнĕ: нимĕçсене Финляндирен хăваласа кăларса ярияччен вăрçăран хăтăлма май çук. Халăх нимĕçсене кураймасть. Вĕсем хăйсене хăйсем Финляндире питех те чарусăр тыткалаççĕ, упăшкисем фронта кайнă финсен арăмĕсене ирĕксĕрлесе пусмăрлаççĕ, пăсса яраççĕ. Салтаксем яланах нимĕçсене хĕнесе тăкма хатĕр. Нумаях пулмасть Турку хулинче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Нимĕçсен пĕр унтер-офицерĕ финсен салтакĕсене сутăнчăк воякăсем тенĕ. Çапăçу пуçланса кайнă, алла хĕçпăшал ярса тытнă. Вара çав çапăçура 3 нимĕçе вĕлернĕ тата темиçе çынна чылаях йывăр амантнă».

* * *

Польша патриочĕсем октябрĕн 8-мĕшĕнче Варшава çывăхĕнчи Хĕвеланăç вокзалĕ патĕнче, Плудăра тата ытти пунктсенче те чугунçул линине сирпĕнтерсе янă. Поездсем çӳрессии чарăнса ларнă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем темĕн чухлĕ шырасан та, çав чугунçул линине кам сирпĕнтерсе янине пĕлеймен.

Октябрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене тĕреклетсе тăнă тата уйрăм участоксенче противникпа хирĕç-хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Пирĕн артиллери 2 оруди, 7 миномет, 11 автомашина пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Старши сержант Дудковăн отделенийĕ тăшмана икĕ çуртран хăваласа кăларнă. Отделени боецĕсем противник пехотин пĕр взводне пĕтерсе тăкнă. Сержант Березовец юлташ нимĕçсен пĕр самолетне станковăй пулеметпа персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырăнти çапăçусем пулса пынă. Якубовский юлташ командир пулса тăракан чаçăн танкисчĕсем 300 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 4 оруди, 8 миномет, 26 пулемет тата боеприпассем тиенĕ темиçе автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн 22 снайпер 14 кун хушшинче нимĕçсен 323 салтакне офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем противникпа çапăçна, вĕсем нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн артиллери нимĕçсен 6 танкне, 4 орудине тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашини таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противникăн йышлăрах вăйĕсем пирĕн Н-ски чаçăн тылне кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем хирĕç пырса çапса нимĕçсене хăйсен тĕп вăйĕсенчен татса илнĕ те, меллĕ позицисемпе пĕлсе усă курса, 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. 15 пулемет, 5 противотанковăй пăшал, винтовкăсем нумай тата ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

Климович лейтенант командир пулса ертсе пыракан краснофлотецсен отрячĕ катерсем çинчен Хура тинĕсĕн противник йышăннă çыранне аннă. Моряксем халăх пурăнакан пунктри румын кавалерийĕн эскадронне кĕтмен çĕртен тапăннă та противника пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен складне тата радиостанцие сирпĕнтерсе ярса, штаб документчĕсене тытса илсе, краснофлотецсем пĕр çухатусăрах хăйсен базине таврăннă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен отрячĕ оккупантсемпе çапăçса гитлеровецсене 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри партизан-подрывниксен группи икĕ паровоза тата горючи тултарнă темиçе цистернăна çĕмĕрнĕ.

* * *

14-мĕш танковăй дивизири мотоциклетнăй батальонăн 4-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Эмиль Бегнер çапла каласа панă: «Вырăссем вăйлăн хирĕç тăнă пирки эпир хамăрăн техникăпа çителĕклĕ таран усă кураймастпăр. Сăмахран, пирĕн мотоциклетсене тылрах хăварса çурран, тĕрĕссипе каласан, шуса пырса наступлени тумалла пулчĕ. Францире эпир мотоциклсем çинче ларсах тата пынă çĕртех персе наступлени турăмăр. Кунта, Сталинград патĕнче, апла тума май çук. Вырăссем тăвăллăн [illegible] 170 салтак вилнĕ те аманнă. [illegible] Юлашки вăхăтра [illegible] «Вырăссене вăрçма пите йывăр», «Вырăссен артиллерийĕ шуйттан пек перет», «Малашне те çаплах пулса пырсан, эпир пĕтсе ларатпăр».

* * *

Нимĕç çарĕн тылĕнчен килнĕ партизансем Псков хулинчи лагерьте тыткăнра асапланса пурăнакан красноармеецсен пурнăçĕ питех те начарри çинчен каласа панă. Нимĕçсем тыткăнри красноармеецсене çĕрнĕ пахча-çимĕçсем тата çĕрулми аври ярса пĕçернĕ пăтранчăк шӳрпепе тăрантараççĕ. Çав лагере хупнă çынсене талăкра 16-шар сехет ĕçлеттереççĕ. Ытла начарланса кайнипе йăванса каякан красноармеецсене нимĕçсен фашистла бандичĕсем çав вырăнтах персе вĕлереççĕ. Сентябрь уйăхĕнче нимĕçсем тифпа чирленĕ 17 красноармееца чĕрĕллех çĕре варса хунă.

* * *

Прагăпа Бенешов хушшинчи чугунçул участокĕнче (Чехословакия) нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта каякан поездне крушени пулнă. Пĕр паровоз тата танксем тиенĕ 27 платформа сĕмĕрĕлсе кайнă.

Тăван çĕршывшăн Чапаев пек кĕрешме пулатпăр

Пĕр чаçри красноармеецсем митингра йышăннă çырăва эпир, Н-ски чаçри чăваш красноармеецĕсемпе командирĕсем, пысăк хаваслăхпа вуласа сӳтсе яврăмăр. Асăннă чаçри красноармеецсемпе командирсем тăшмана хамăрăн земляк Чапаев пек аркатса пыма пулнипе эпир чĕререн килĕштерпĕр, пирĕн тăван çĕршыв кунçулĕшĕн йывăр вăхăт килсе тухнă вăхăтра нимĕç оккупанчĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыма пулатпăр. «Немцем меньше—победа ближе», «Смерть немецким оккупантам!» тенĕ лозунг пирĕн пурнăçăн кулленхи законĕ пулса тăчĕ, эпир хамăрăн çапăçупа, кĕрешӳпе хамăрăн арăмсен, аттесен, аннесен, ачасен, тăвансен, юратнă хĕрсен кунçулне хӳтĕлетпĕр, тăван çĕршывăн чапне тата ытларах çӳле çĕклетпĕр. Октябрь уйăхĕнче пирĕн чаçе йĕркелени çулталăк тултарать. Пирĕн чаçе чăваш халăхĕн ывăлĕсене пухса, чăваш халăхĕ пулăшнипе йĕркеленĕ. Çак вăхăт хушшинче пирĕн часть тата унти красноармеецсем, командирсем тăван çĕршывшăн кĕрешес ĕçре сахал мар паттăрлăх кăтартрĕç. Отделени командирĕ И. Карсаков юлташ тăшман самолечĕсем станци çине вĕçĕ-хĕррисĕр бомбăсем пăрахнă чухне боеприпассем тиесе тухса ăна фронтăн малти линине—минометсем, артиллери батарейисем патне леçсе пачĕ. Тăшман авиацийĕ пулеметран шатăртаттарса тăнă вăхăтра, нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр, боеприпассене хăй вырăнне çитерне. Отделени командирĕ пулнă, халĕ урăх чаçре ответлă ĕçре ĕçлекен Седов юлташ, тăшман артиллерирен персе тăнине пăхмасăр, хăйне хушнă приказа отлично пурнăçласа темиçе благодарность илчĕ.

Хаклă землякĕсем, Чăваш республикинчи ĕççыннисем, эсир инçетри тылра тăрăшса ĕçлени пире хавхалантарать, вăрçă условисенчи йывăр задачăсене пурнăçлама, тăшмана çĕнтерме вăй парать. Эпир, Н-ски чаçри чăваш красноармеецĕсемпе командирĕсем, пулас çапăçусене хатĕрленсе ылханлă тăшмана çапса аркатма, çак çапăçура Ленин—Сталин парти ялавне, тăван çĕршыв ялавне çӳлте тытма пулатпăр. Пирĕн сире пĕр сĕнӳ пур: тылра тăрăшса ĕçлĕр, сыхă тăрăр, фронта пулăшассине вăйлатса пырăр, çапла тусан пирĕн фронтри ĕçсем татах ăнăçлă пулса пырĕç.

Старши политрук Р. ШАШКОВ, старши лейтенант К. ЛЕБЕДЕВ, взвод командирĕ К. ИВАНОВ, отделени командирĕ КАРСАКОВ, красноармеецсем: ЕФРЕМОВ, ПАВЛОВ, МАТВЕЕВ, БОГДАНОВ, старши сержант Г. ЯКИМОВ, старши политрук М. МЕДВЕДЕВ, старшина П. ОСИПОВ, часть командирĕ капитан Н. НИКИТИН.

Ют çĕршывсенче

РУМЫНИ ОККУПАНЧĔСЕМ СОВЕТ ХАЛĂХНЕ МĂШКАЛЛАÇÇĔ

СТАМБУЛ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем румынсем оккупациленĕ совет районĕсенче вăрă-хурахла хуçаланни çинчен намăса пĕлмесĕр çыраççĕ. Румыни захватчикĕсем пĕтĕм совет халăхне çаратаççĕ, унран тумтирсене тата юлашки татăк çăкăра туртса илеççĕ.

«Аргус» хаçат çапла çырать: нумаях пулмасть Одессăра «административнăй конференци» пулса иртнĕ, унта Румынин Одессăри «информаторĕ» Алексиану сăмах тухса каланă. Вăл конференцие пухăннă чиновниксемпе полицейскисен шайккине вĕсен вăрă-хурахла ĕçĕ мĕн енĕпе пулса пымалли çинчен «кăтартусем» панă. Кĕрхи тырăсене акмашкăн Алексиану вырăнти халăхран вăрлăха туртса илме хушнă, çав ĕçе тунă чухне вырăнти халăха пĕрех те шеллесе тămалла мар, тенĕ.

Алексиану оккупациленĕ çĕр çинче çĕнĕ тырра халăхран пĕтĕмпех туртса илмеллине астутарса хăварнă. Румын çаратуçи хăйĕн «инструкциллĕ сăмахне» çапла каласа вĕçленĕ: «Совет халăхне шеллесе тămалла мар, ку тĕлĕшпе пĕртте иккĕленсе тămалла мар», тенĕ.

Хĕл çывăхарса килнĕ май тата Румынин çĕтĕк-çурăк тăхăннă, пыйтланса кайнă армине ăшă тумтирсем тупса памалла пулнипе, оккупациленĕ территорире халех ĕнтĕ тумтирсене массăллăн туртса илеççĕ. «Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румыни войскисен кашни чаçĕ çак ĕçпе ятарласах уйрăм группăсем уйăрса хунă. Çав группăсем оккупациленĕ ялсемпе хуласенче килсем тăрăх çӳресе халăхран пĕтĕм тумтире туртса илеççĕ.

Совет хресченĕсене çĕр çинчен хăваласа яраççĕ, вĕсен кил-çуртчĕсене тата пахçисене туртса илсе румынсене параççĕ. Гитлеровецсен «Нейе орднунг» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Антонеску нумаях пулмасть çакăн пек закон кăларнă: çапăçусенче палăрнă румын салтакĕсемпе офицерĕсене оккупациленĕ районсенче 25-шер гектар çĕр памалла, тенĕ.

Вырăссемпе украинецсене хăйсен чĕлхипе вĕренме чарнă. Оккупантсем çамрăк ачасемпе çитĕнмен çынсене ирĕксĕрле йывăр ĕçе хăваласа каяççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ÇУРÇĔР ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюнике каланă тăрăх, Англи самолечĕсем октябрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Çурçĕр Германири промышленноçăн темиçе объектне тапаннă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Ленинград фрончĕ). Укерчĕк çинче: Орденоносец Степановăн подразделенийĕнчи хăюллă разведчиксем тăшманăн траншейисем патнелле шăвăнса пыраççĕ.

Б. ЛОСИНĂН фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Черчилль Эдинбургра тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль, ăна Эдинбург хулин хисеплĕ гражданинĕн ятне панă май, çав хулара сăмах тухса каланă.

Черчилль хăйĕн сăмахĕнче Англия «хальхи вăхăтра питех те таччăн пĕтĕçсе тăнине, кун пек пĕтĕççе тăни унăн историйĕнче халиччен нихăçан та пулманнине» палăртнă.

Гитлерла вожаксен юлашки выступленийĕсем пирки чарăнса тăрса, Черчилль çапла каланă:

«Яланхи пекех каппайса тата юнаса каласнă сăмахсем хушшинче гитлеровецсем салхуллăн та тарăхуллăн йынăшни сасă илтĕнет. Çакă вăл хăйсен айăпĕ çинчен тата çав айăп пирки закон мĕн калани çинчен пĕлсе тăракан çынсен кăшкăравĕ. Çав кăшкăрусем 1940 çулти сăмахсенчен мĕн тери уйăрăлса тăраççĕ-ха ĕнтĕ! Гитлер питех те пысăк çĕнтерӳсем тунă пулин те тата нумай çĕрсем çĕнтерсе илнĕ пулин те, телей унран тарнине вăл хăйĕн чунĕнче пĕлет. Юлашки икĕ çул хушшинче унăн малашнехи ĕçĕсем питех те тĕксĕмленчĕç. Пирĕн пораженисем çĕнтерӳ патне çитмелли çул çинче уйрăм пусăмсем кăна пулса тăнине, унăн çĕнтерĕвĕсем вара пĕтсе лармалли çул çинчи пусăмсем пулса тăнине вăл курать те тĕлĕнет.

Гитлера тарăхтаракан сăлтавсенчен пĕри вăл — хăрани те пулса тăрать. Норвегири Нордкапран пуçласа Испани чиккинчи Байоннăна çитиччен, 2.500 мильăна яхăн тăсăлакан çĕр талккишĕнче, Германин захватчикла çарĕсем, тискер вăйпа тата террорпа усă курса, Хĕвеланăç Европăри халăхсене пăхăнтарса тăраççĕ. Норвегия, Дания, Бельгия, Франция—вĕсене пурне те Гитлерăн чĕрни ярса илнĕ, вĕсенче пур çĕрте те пăлхавсемпе революцин хумĕсем тăвăлланса çĕкленеççĕ. Данисĕр пуçне, пур çĕрте те çынсене массăллăн пере-пере пăрахаççĕ. Анчах Данин те черечĕ çитет. Заложниксене е паллă граждăнсене кунран кун ытларах арестлеççĕ, ним шухăшламасăр пере-пере пăрахаççĕ. Çав авалхи халăхсен чĕрисенче Германи расине, Германи халăхне курайманнин çулăмĕ кунран-кун вăйлăнрах çулăмланса çĕкленет. Англин ударлă отрячĕсем çав таçта çити тăсăлакан çыранри тĕрлĕ пунктсем çине тунă рейдсем малашнехи ĕçсен пĕрремĕш утăмĕсем кăна пулса тăраççĕ. Çавтери нумай преступленисемпе тискер ĕçсем тунă çынна вĕсем шиклентереççĕ. Гитлерăн салтакĕсем вĕсене май килсе тухсанах пăвса пăрахма хатĕр тăракан, вăхăт çитсенех вĕсене пĕтерсе тăкма хатĕр тăракан халăх хушшинче пурăнаççĕ.

Норвегири, Бельгири, Голландири тата Францири айăпсăр заложниксене, вĕсен хăватне хавшатас шутпа, пере-пере пăрахнă пекех, Гитлер, тĕнче вăрçинче халĕ те хăйсен вăйне çухатман йышлă мар конвенцисене пăсса, хăйĕн çиллине шăнараймасăр, тыткăна лекнĕ çар çыннисене асаплантарать, вĕсене сăнчăрсемпе сăнчăрласа лартать. Нацистла преступниксем тавра хĕрхенӳсĕр вилĕм унки хĕсĕнсе пынă май çак вăрçă татах та ытларах тискерленĕ тесе эпĕ яланах шутланă. Кунта, Хĕвеланăçĕнче, тискер кайăкла ĕçсене эпир нумай курнă. Анчах та Хĕвеланăçĕнче халиччен пулса иртнĕ ĕçсене гитлеровецсем, Российăна тапăнса кĕрсен, салтаксене кăна мар, граждăнла халăха та, хĕрарăмсемпе ачасене те массăллăн вĕлерсе пĕтернипе нихăшенчен те танлаштарма çук. Российăра, Польшăра тата Югославире Германи çарĕ тата яланах Германи çарĕпе пĕрле пыракан, хăрушă ĕçсем тунă çĕрте тĕп вырăн йышăнса тăракан специальнăй полицин батальонĕсемпе бригадисем вуншар пин çынна пĕр шухăшласа тăмасăр вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Гитлер Хĕвеланăçĕнче вĕлерме хушнă кашни çын пуçне Хĕвелтухăçĕнчи тата Вăтаçĕрти Европăра сахалтан та 200-шер çынна асаплантарса вĕлерни тивет. Киева пырса кĕрсессĕн, вăл 54 пин çынна персе вĕлернĕ. Çавнашкал тискер çын çине кирек мĕнле йăвашчунлăн пăхни те малашнехи тискер ĕçсене хавхалантарни кăна пулса тăрать тесе шутлатăп эпĕ. Эсир шанса тăма пултаратăр, çав çынсем тĕлĕшпе пирĕн нимĕнле йăвашчунлăх та пулмĕ.

Англин тыткăна лекнĕ çар çыннисене нумайăн асаплантарма пуçланă çĕрте, Гитлерăн, çын вĕлерме хăнăхса çитнскĕр пуçне, татах та тепĕр сăлтав пур. Тĕнчери обществăллă шухăша сӳтсе явма вăл çĕнĕ тема тупса парасшăн, çапла вара хăйĕн Российăри иккĕмĕш пысăк кампанийĕ халлĕхе уççăнах путланса ларнине пытарса хăварасшăн. Эпĕ яланах «халлĕхе» тетĕп. Сталинграда геройла хӳтĕлени — вăл вырăссен питех те паха çарĕсем пур çĕрте те сыхланса юлнине, вĕсене хавшатайманнине, çапса аркатайманнине, кунтан та ытларах, вĕсем Ленинградран пуçласа Кавказ тăвĕсем патне çитиччен тăсăлакан мĕнпур фронтра, нимĕçсене хирĕç тĕлĕнмелле хăватлă контратакăсем тунине кăтартса паракан факт.

Вырăссен çĕнĕ хĕлĕ çывхарса килнине Германи çарĕсем туяççĕ, — çав тĕксĕм те хăрушă мĕлкесене пытарса хăварма çук. Çав сулхăн мĕлкесем Германи халăхĕ çине, Англи бомбардировщикĕсем хăватлăнрах та хăватлăнрах пыра-пыра çапнипе чĕтрене ернĕ халăх çине, ӳкеççĕ. Çавнашкал йывăр асапсем кӳнĕ руководитель çине нимĕç халăхĕ сиввĕн пăхма тытăнать, халлĕхе хыттăн калама хăяйман пирки, хăй ăшĕнче кăна-ха тарăхса мăкăртатать. Халăх çакăн пек хăрушă ыйту парать: «Мĕншĕн кайрăн эсĕ унта, мĕншĕн эсĕ Российăна çĕмĕрсе кĕтĕн?»

Вăрçă халĕ пĕрлешнĕ нацисен питех те пысăк ыйтăвĕ пулса тăрать. Анчах та çав ыйтăва оборона, наступлени тĕлĕшпе тата пĕтнĕ тоннажа улăштарас тĕлĕшпе туса пыракан çавтери пысăк ĕçсем татса параймĕç тесе шутлама нимĕнле сăлтав та çук. Çав ĕçсене халĕ Англире, Канадăра тата, чи малтан, Пĕрлешӳллĕ Штатсенче вăйлăн туса пыраççĕ. Августпа сентябрь уйăхĕсенче тунă çĕнĕ суту-илӳ суднисем çав уйăхсенче пĕтнĕ суднăсене ытлашшипех витеççĕ. Çак вăхăт хушшинче Германи çине Англи бомбисене чи нумай пăрахнă. Çав уйăхсем хушшинче Америка войскисем Британи утравĕсем çине чи нумайрах йышпа тата ăнăçлăн килсе çитнĕ. Çав уйăхсем хушшинче союзниксен сывлăшри вăйĕсем Германин, Италин тата Японин сывлăшри вăйĕсенчен ӳссе иртсе кайни уççăнах палăрнă. Çав уйăхсем хушшинче, уйрăмăн илсен сентябрьте, инçетри Лăпкă океан çинче австралиецсем, хăйсен союзникĕсемпе—американецсемпе пĕрле, Çĕнĕ Гвинейăра чылай малалла куçнă. Балансăн икĕ енне—начар та лайăх енĕсене пĕр пек лăпкăлăхпах пăхса тухсан, эпир çакна курма тивĕçлĕ: эпир вăрçăн чи хаяр та чи тĕксĕм саманчĕ тĕлне çитрĕмĕр, çакă вăл пиртен чи çирĕп те чăтăмлă пулма, хăватлă та лăпкă пулма ыйтать. Пирĕн йĕритавра эпир чаплă та тачă союзпа çыхăннă нацисен правительствисем тăраççĕ. Эпир вĕсемпе чыслăх туйăмĕпе кăна мар, çавăн пекех тата хамăра хамăр сыхласа хăварас интерессемпе те çыхăннă. Пире вилĕмле хăрушлăхсем хăратса тăраççĕ-ха. Ĕшенни, тимлĕхсĕр пулни е вак-тĕвексем пирки тавлашса хирĕçни пирĕн малашлăха сиен кӳме пултарать. Пирĕн хамăрăн вăйсене вĕçне çитиччен пухмалла. Пирĕн ĕçе тĕрĕс сӳтсе-явас пултарулăха упраса хăвармалла тата ăна лайăхлатмалла та. Пирĕн ăслă шухăшпа хăюлăха таччăн çыхăнтарса пымалла. Эпир пĕрле те пĕрлĕхлĕ пулса тата иксĕлми çирĕп тăрса малалла кайма тивĕçлĕ»

Юратнă хĕçпăшал

Рабочи-кочегар—унăн граждăнла профессийĕ. Пароходсене вăл Шурă Атăл, Атăл, Кама шывĕсем тăрăх илсе çӳренĕ. Кочегар Нурахмет пароходсен двигателĕсене ĕçлеттернĕ.

«Стахановец» пароход çинче чылай хушă ĕçленĕ. Буксир алебастр, известка тата ытти строительство материалĕсем тиенĕ баржăсене çĕнĕ хула пулакан вырăна турттара-турттара пынă. Таса вырăнта хула чечекленсе ӳснĕ.

Социализмлă çĕнĕ хула—Молотов хули ӳснĕ. Хулана тунă çĕре çамрăк йĕкĕт Нурахмет та вăй хунă. Унпа пĕр вăхăтра нумай хуласем, фабрик-заводсем шăта-шăта тухнă.

Бандит Гитлер пирĕн пĕтĕм телейлĕхе туртса илме хапсăнать. Çĕршыв хăрушă кунсем пурăнса иртнĕ вăхăтра Нурахмет Ведертдиновича Хĕрлĕ Çара илеççĕ. Пулеметчик—унăн çарти специальноçĕ.

Поезд фронт еннелле пырать. Боецсем «За родину» юрра шăрантарма тытăнчĕç. Нурахмет юрламасть. Вăл хăйĕн юратнă хĕрĕпе, райпотребсоюз бухгалтерĕпе Лиза Ивановăпа калаçса пырать. Лиза ăна çывăхри разъезда çитиччен ăсатса яма сăмах панă.

— Вырăна çитсен фашистсене çапа аркатни çинчен çырса яр. Киле çĕнтерӳ туса таврăнăр.

— Обязательно çыратăп. Пĕтĕмпех эсĕ калашле пулĕ.

* * *

Батальон фронтран инçех мар. Пулеметсем шатăртатни, минăсем ӳке-ӳке çурăлни ирхи шăплăха сирсе тăрать. Нурахмет хăйĕн юлташĕсем патне блиндажа пычĕ. Каçхине вăл дозорта пулнă. Нимĕç разведчикĕсем 4 çын унран 250—300 метрта кăна пулнă. Кăшт тăнă та каялла таврăннă.

— Пулеметпа кĕçех çулса тăкаттăмччĕ. Пĕри те тарса ĕлкĕреймесчĕ. Анчах юрамасть. Командир пеме ирĕк памарĕ.

— Пенĕ пулсассăн, пирĕн оборона ăçта пулнине тата огневой точкăсем ăçтине пĕлнĕ пулĕччĕ противник,—ăнлантарчĕ батальон командирĕ лейтенант Козлов.

Нурахмет Ведертдинович Алихманов пулеметчик. Наводчик ĕçне кăна мар, пулемет начальникĕ, наблюдатель-дальномерщик ĕçĕсене те туса пыма пултарать. Анчах вăл ручной пулемета станковăй пулеметран ытларах юратать.

Пĕр ялшăн тата çывăхри высоташăн вăйлă çапăçу пычĕ. Пирĕн мухтавлă пехотинецсем, ирхине наступление тухнăскерсем, çур яла яхăн йышăнчĕç. Кашни метр çĕршĕн, кашни çуртшăн вăйлăн кĕрешеççĕ. Нурахмет çӳлĕрех вырăна пырса выртрĕ. Унăн пулемечĕ фашистсене çулса тăкма тытăнчĕ.

— А-а çĕленсем, çавă кирлĕ-ха сире...

Фашистсем пулемет ăçтан персе тăнине туйса илчĕç пулас. Пульăсем час-часах пуç тăррипе шăхăра-шăхăра иртрĕç. Унччен те пулмарĕ, инçетрех те мар, снаряд ӳксе çурăлчĕ. Снаряд ванчăкĕ Нурахмет пуçне пырса çапăнчĕ. Каскăна витĕрех шăтарса тухса, пилоткăна пырса тăрăннă. Пулеметчик огневой позицине хăвăрт улăштарса, урăх тĕлтен, фашистсем кĕтмен тĕлтен персе тăма тытăнчĕ.

Нурахмет Ведертдинович Алихманов яланах пĕлсе çапăçать. Унăн юратнă хĕçпăшалĕ—ручной пулемет нихăçан та чарăнса тăмасть. Алихманов вуншар фашистсене вĕлернĕ. Хăюллă пулеметчик тарма тытăннă фашистсен çулне пӳлсе лартнă. Тăватă обоз тата лавсем çине тиенĕ груз пирĕн алла лекрĕ.

Нимĕç фашисчĕсене хирĕç хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса çапăçнăшăн Нурахмет Ведертдинович Алихманов, юлташа «За отвагу» медаль парса наградăларĕç.

Лиза Иванова ăна фронта ăсатнă чухне паттăррăн çапăçма хушса янă. Нурахмет хăйĕн юратнă хĕрĕн сĕнĕвне лайăх пурнăçа кĕртет.

Т. МАЙОРОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас ĕçе лайăх йĕркелесе янă. Халĕ МТС-ра ĕçлекенсем пĕр кĕрĕк пиншак, пĕр тăлăп, тиртен çĕлесе тунă виçĕ жилет, 8 çĕлĕк, 3 алшăлли, 5 тир, икĕ килограмм çăм т. ыт. япаласем те хатĕрлесе пачĕç.

Уйрăмăн илсен, А. Долгов юлташ пĕр кĕрĕк пиншак, пĕр çĕлĕк, пĕр алшăлли, трактор бригадин бригадирĕ Саландаев юлташ пĕр мăшăр çăм атă, Коновалов, Воронков юлташсем пĕрер тир панă. Кашни тракторист пĕрер мăшăр çăматă пама хатĕрлеççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВСЕМ РУКОВОДИТЕЛЯМ И ГЛАВНЫМ БУХГАЛТЕРАМ ПРЕДПРИЯТИЙ, УЧРЕЖДЕНИЙ И ОРГАНИЗАЦИЙ ЧУВАШСКОЙ АССР.

В соответствии с инструкцией НКФ СССР № 163 „О порядке реализации Военного займа", предприятия, учреждения и организации к 15 октября 1942 года обязаны представить в районные (центральные) сберегательные кассы, сведения по ф. № 140 о распределении всей суммы подписки коллектива на Военный заем по достоинству облигаций (покупюрную заявку).

Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.

ВОДОСВЕТУ ТРЕБУЮТСЯ: слесаря 6 и 7 разрядов, машинисты, пом. машиниста к двигателям дизеля, электромонтеры, техники-электрики, шофера, вахтеры пожарной охраны, каменщики, чернорабочие, бухгалтера и ученики (женщины) для подготовки слесарей, электриков, машинистов, пом. машинистов и смазчиков.

Одиночки обеспечиваются общежитием, имеется столовая.

Обращаться: Водосвет, отдел кадров, тел. 4—28.

ДИРЕКЦИЯ ВОДОСВЕТА.

Пропал мерин светло-гнедой масти, грива направо, на лбу звезда, под седелкой подпарины, задние обе ноги под щетками белые. Знающих о местонахождении его просьба сообщить по адресу: г. Чебоксары, Чувашская, 83.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропаганд ĕпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11232. Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 53 84 п. л.